**Пурнăçри йăнăшăмсем**

Нумай-и, пысăк-и? — пĕрех
Ман пурнăçри йăнăшсене
Сутма пулсассан, йӳнĕпех
Парасчĕ кирлĕ текене.

Пулман теместĕп. Вĕсенчен
Пĕри юлайнă ĕлĕке.
Тепри-ха халь те каçсенче
Пăсать ман ырă тĕлĕке.

Тытсассăн ĕç — алăсене
Чăлхантараççĕ серепен.
Канам тесен — чун хĕлĕхне
Карăнтараççĕ ерипен.

Чун тулашсан, пулас килет
Чăрсăртарах, чунсăртарах.
Çынран имен! — тĕксе илеç.
Йăвашланатăп самантрах.

Вĕсем ман пурнăçри уртмах,
Ĕшентереççĕ хулсене.
Çапах вăй тупăнать утма
Çитмелĕх хам тĕллев патне.

Манам тесен те, канăçа
Тупаççĕ пăтратма майне.
Алран тытса, вăрçа-вăрça
Илсе пыраççĕ ĕç умне.

Вара шутлатăп:
Тĕнчере
Пӳрес тĕк йăнăшсăр утма,

Мĕскер хистейĕ-ши пире
Таса та çутăрах пулма?

*Гордеев, Д. Пурнăçри йăнăшăмсем : [сăвă] / Д. Гордеев // Тăван Атăл. – 2010. – № 2. – С. 84.*